Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартнине тĕрĕслетпĕр

Те ĕçлекен агрегат, те кустăрма çинчи тимĕр-тăмăр...

«Ку косилка та çуллахи пылчăкран тасалайман», – терĕç комисси членĕсем «Колос» АПФ» ОООра.

Чўк уйăхне кĕтĕмĕр, сивĕ хĕл кунĕсемччен шутлă кунсем юлни ыранхи кунпа пурăнакан кашни хресченшĕнех паллă. Апла пулсан кăçалхи уй-хир ĕçĕсем вĕçленнĕ май çитес çулхи тухăç пирки те паянах шутламалла. Ĕç çине çиччĕ виçсе пăхакансем çапла тăваççĕ те. Черетлĕ тĕрĕслевпе иртнĕ кунсенче Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи М. Лукиянов ертсе пыракан «Колос» АПФ» ОООра тата В. Горбунов хресчен (фермер) хуçалăхĕнче пултăмăр. Эпир пынă кун таврара илемлĕ çанталăк тăратчĕ – кая юлнă ылтăн кĕркунне тейĕн. Икĕ хуçалăхĕнче те уй-хир ĕçĕсем вĕçленнĕччĕ. Пĕрремĕшĕн машинăпа трактор паркне çитсен кунта çитес çул та тырă-пулă акмалли тата пуçтарса илмелли пирки маннăнах туйăнчĕ. Хăрушсăрлăх ыйтăвне пăхăнманни те куç умĕнчен каймарĕ.

Пурнăç уттипе тан пыма вĕрентетчĕç пире унăн тутимасине курнă атте-аннесемпе аслăрах ăрури çынсем ачалăх çулĕсенче. Вĕсем ун чух панă ырă сĕнўсемпе паян эпир хамăр ачасене ăс паратпăр. Çакă çур акирен хура кĕркуннеччен пĕрлешўллĕ хуçалăхсен уй-хирĕсенче ĕçленĕ техникăна хĕллехи управа лартнине тĕрĕсленĕ чух та çаплах пулмалла пек, анчах вырăнсене çитетĕн те... Куллен шкула машинăпа трактор паркĕ çумĕпе иртсе çўрекен шкул ачисем ашшĕсем е аслăрах ăрури ытти пиччĕшĕсем çуркуннерен кĕркуннечченех хирте хăйсем ĕçленĕ техникăна ĕç хыççăн парка çитерсе тĕлсĕр-палсăр лартнинчен, ĕнер кăна-ха кирлĕ пулнă техника çине вĕсем паян алă сулнинчен пуç пăрса иртсе кайни камшăн килĕшўллĕши? Çамрăксене çакнашкал пĕлў паракан «воспитательсем» хăйсене тĕкĕртен пăхаççĕ-ши? Ăнланатăн пуль, вулаканăм, ку ыйтусем хуравсăр. Паян вара хăш-пĕр хуçалăхсен машинăпа трактор паркĕсене çитсен кун пек ыйтусем пĕрин хыççăн тепри ума тухаççĕ. Вĕсен хуçисем Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çул панă «АПКна аталантарасси» приоритетлă наци программи хăйсем умне капланнă йывăрлăхсене хăех сирет тесе шутлаççĕ пулас. Йăнăшаççĕ вĕсем, пыл тенипех çăвара пыл лекмест çав. Наци проекчĕн уссине курас тесен те малтан çанă тавăрса ĕçлес пулать. Ыранхи кунпа пурăнаканшăн паян пур çулсем те уçă. Паянхи тĕслĕхре вара пирĕн каласу шăпах вĕсем çинчен.

Тивĕшре М. Лукиянов ертсе пыракан «Колос» АПФ» ОООра машинăпа трактор паркне кĕрсен кунти хуçа ыранхи куна пăхни пачах курăнмасть: кăçал ĕçленĕ техникăпа çитес çул та тыр-пул туса илес темеççĕ пулас, мĕншĕн тесен вĕсен пĕр пайĕ парка та кĕреймен, кĕнисем те хăйсен вырăнĕсене

Тивĕшри М. Лукияновăн мехпаркĕнчи ял хуçалăх техникин хĕл умĕнхи «тĕл пулăвĕ».

тупайман. «Пус çумне пус хушăнать», – тет укçа шутне юратакан. Анчах асăннă хуçалăхра укçа шутне пĕлменни, ыранхи пирки шутламанни, «АПКна аталантарасси» наци программипе килĕштерсе пурăнманни малти вырăнта тăрать. Халĕ каланине паянхи сăн ўкерчĕксем те уçăмлă çирĕплетеççĕ. Áçта кунта хĕл умĕнхи йĕрке? Хуçалăхра хуçасăрлăх аталаннине çирĕплетмест-и-ха куç умне пулнă ўкерчĕк? Хирĕçле хуравлаймăн та. Хиртен çитсе áçта кирлĕ унта вырнаçнă, пылчăкран тасалайман, симĕс калчапа витĕннĕ, акаран юлнă тырă вăрлăхĕнчен те пушанайман техника Раççей Федерацийĕн Президенчĕ кун çути панă наци программипе, Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров ялсене çĕклеме кăларакан йышăнусемпе «кĕрешсе» хамăр япăх пурăннин сăлтавĕ хамăртах пулнине çирĕплетеççĕ.

Пĕр условисенчех пурăнатпăр, анчах çак ял тăрăхĕнчи Виталий Владимирович Горбунов ертсе пыракан хресчен (фермер) хуçалăхĕнче ĕçре куллен кирлĕ техникăн пурнăçне тăсасси пирки шутлани вара кашни утăмрах палăрчĕ. Кунта ĕнер хирте ĕçленĕ техникăна паян пĕтĕмпех гаражсене лартассипе тимлеççĕ. Акă áçта вăл укçа-тенкĕ, экономика тĕрекĕ.

– Çĕршыв ĕçлекене пулăшать. Çак пулăшупа туллин усă курас тесен çывăрмалла мар, çанă тавăрса ĕçлемелле, – тет Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров. Анчах хулăн ўтлисем çакна илтмеççĕ, çынсем умĕнче «наци проекчĕсемпе çĕнĕ технологисем» пирки чарăнмасăр калаçаççĕ.

– Патшалăх техника надзорĕ техникăна упрама ятарлă вырăнсем йĕркелеме ыйтать. Çакă вăл хамăрăн малашлăх валли, – терĕ çывăх кунсенчех хута каймалли гаражне кăтартса В. Горбунов фермер.

С. НИКОЛАЕВ,
патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕ;
А. ПАВЛОВ,
ял хуçалăх пайĕн тĕп агрономĕ;
А. БЕЛОВ,
район хаçачĕн экономика пайĕн ертўçи.

Вырăнти ял тăрăхĕсенче

«Халăхпа калаçса халăхшăн ĕçлерĕмĕр», –

пĕтĕмлетрĕ калаçăвне Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. П. Мазиков.

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ хăйĕн калăпăшĕпе районта чи пысăккисенчен пĕри. 19 яла пĕрлештерсе тăрать вăл. Пĕр-пĕр ялтах кая хăвармасăр татса памалли ыйтусем вуншаррăн пулсан, Мăнсĕнтĕрсене ку енĕпе «ăмсанмалли» çеç юлать. Ĕçлекен çынна вара чăннипех ăмсанмалли чылай. Çакна «хăш-пĕр хыпарсем» хăлхана кĕнĕ хыççăн Мăн Сĕнтĕрте пулсан хам куçпа хам курса ĕнентĕм: хăй вăхăтĕнче район центрĕ пулнă сала юлашки çулсенче тĕпрен çĕнелсе улшăнчĕ, ăна та, çывăхри ялсене те хăт кĕчĕ. «Чăваш Республикинчи чи лайăх муниципаллă йĕркеленў» ята илме тата Чăваш Республикинчи ял тăрăхĕн чи лайăх пуçлăхĕ пулма çăмăл-и вара? Çакна валли укçатенкĕ áçтан тупса çитермелле, ĕçсене епле йĕркелемелле? Çак ĕçрен аякра тăракан çынсене, паллах, ку ыйтусем çине хуравлама ансатрах. Çывăхарах пăхсан... Çакна тĕллеве хутăм та ĕнтĕ хамăн черетлĕ çул çўреве тухас умĕн.

Геннадий Петрович Мазиковпа ял тăрăхĕн администрацийĕ вырнаçнă хăтлă çуртра калаçса ларатпăр. Акă инçетри Оркум ялĕнчен килнĕ арçын хăйĕн ыйтăвне меллĕ татса панăшăн тав туса тухса кайрĕ.

– Хамăр ĕçе шута хуракансемпе ытларах та ытларах ĕçлес килет, анчах пур чухне те çапла пулса тухмастьçке. Санăн ĕçе шута хуманни сисчĕвлентерет те хăв çул панă пуçару тĕлĕшпех ĕçлеме сивĕтет, – темĕн шахвăртнăн калаçать стена çинче çакăнса тăракан 2008 çулхи ĕç кăтартăвĕсемпе «Чăваш Республикинчи чи лайăх муниципаллă йĕркеленў» ят илнĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ хăйне те «Чăваш Республикинчи 2008 çулхи ял тăрăхĕн чи лайăх пуçлăхĕ» ят пани пирки калакан свидетельствăсем çине аллипе кăтартса.

Хальхи пекех астăватăп, районти капиталлă строительство пайĕнче чылай çул инженер-строительте ĕçленĕ Геннадий Петровича ĕçĕсене кура 2004 çулхи декабрьте Мăн Сĕнтĕр ял администрацине ертсе пыма шанчĕç. Вăл вăхăтра ял администрацийĕн хăйĕн бюджечĕ пулманран куça курăнакан нумай çитменлĕхсене татса парас ыйтусем те нумай тăнă. «Мĕн тумалла? Ĕçлемелле! Шаннине тўрре кăлармалла», – çак шухăшсемпе кўлĕнчĕ çĕнĕ ертўçĕ Мăн Сĕнтĕр ял администрацийĕн пуçлăхĕн ĕçне. Мирлĕ професси ĕçченĕн пурнăçĕнче çĕнĕ ĕç вырăнĕнче те строительство ыйтăвĕсем малти вырăна тухрĕç. Çынсен социаллă ыйтăвĕсене татса парассине мала тăратнăскершĕн вăл вăхăтра ял тăрăхĕнчи пĕртен-пĕр ĕçлекен Культура çуртĕнче те чĕрĕк ĕмĕр сăрă шăрши пулманни питĕ тунсăхлă пулăмччĕ. Район хаçачĕн критика пиçиххийĕ пырса çапнă Шупуçĕнчи ял клубĕ те пĕрремĕш çул мар аварилле лару-тăрура «хуçасăрччĕ». Çавăнпа пĕрлех ку ялти пуçламăш шкул хупăннăран районти чи ватă шкул çурчĕ çил вылятса ларатчĕ. Кусемпе пĕрлех Мăн Сĕнтĕртех унта та кунта картасем ишĕлнĕччĕ, масар çинче йĕрке сахалрахчĕ, сала урамĕсене хăт кĕртесси çивĕч тăратчĕ. Общество культурине аталантарасси ишĕлчĕкрен пуçăнмалла мар тесе Г. Мазиков вĕсемпе кĕрешессине малти вырăна тăратрĕ. Анчах ырă шухăшсем умĕнче те пысăк ыйту тăрать: укçа-тенкĕ çук. Каллех мĕн тумалла? Ыйăвăрлăхсем умĕнче пуç усма хăнăхман строитель çўлти пуçлăхсенчен укçа-тенкĕпе пулăшу ыйтçан, хуравĕ ансат пулать: «Ĕçне ту – укçи пулать». Ĕçне тума вара укçи кирлĕрех-çке. Çакăнта вырăнти çитменлĕхсене курса тăракан тата вĕсене пĕтерессишĕн чунне ыраттаракан Виталий Анатольевич Гаврилов пулăшма пулать. Пулăшуçă вăл вăхăтра районта çĕнĕ условисенче производствăна аталантарма пултарнă «Гавитан» хресчен (фермер) хуçалăхĕн ертўçиччĕ. Район шайĕнче те çакăнпа килĕшеççĕ. Çапла вара Геннадий Петрович ял тăрăхĕнчи строительство ĕçĕсене пурнăçлама килти укçа-тенкĕпе усă курать те район администрацийĕ ăна пурнăçланă ĕçсемшĕн «Гавитан» хресчен (фермер) хуçалăхĕ урлă саплаштарать.

Вомпăкассинчи социаллă центр ял халăхĕн культурине ўстерме пулăшнине кунта никам та хирĕçлемест.

Ĕç йĕркеленчĕ темелле. Çĕнĕ хăватпа Геннадий Петрович Шупуçĕнчи юхăнса ларакан ял клубне хупăнса ларакан шкул çурчĕпе çĕнетсе ялти социаллă пурнăçа йĕркелесе ярать. Пилĕк уйăхран ялта çĕнĕ клуб уçăлать, çамрăксем валли кану вырăнĕ йĕркеленет. 2005 çулхи 5 уйăхра çак пĕлтерĕшлĕ ĕçе пурнăçлама ял администрацийĕн пуçлăхĕ аслисемпе тунă килĕшўпе хăйĕн çемье бюджетĕнчен çакна валли 100 пин тенкĕ кăларса хурать. (Кунта çакна каласа хăвармалла: çемье членĕсем пĕчĕк бизнесра вăй хунăран çемье пуçĕ çĕнĕ ĕçри укçа-тенкĕ ыйтăвĕсене вĕсен тупăшĕпе «картласа» пырать). Палăртнă йĕркепе вăл укçатенкĕ тепĕр икĕ уйăхран «Гавитан» хресчен (фермер) хуçалăхĕ урлă хуçи патне таврăнать, паллах. Çак йĕркепех Мăн Сĕнтĕрте картасене юсасси, ял çăви çинче йĕрке тăвасси т. ыт. те вăй илеççĕ.

Çĕнĕ ертўçĕн ял пурнăçĕшĕн тунă пуçламăш утăмĕсем паллă. Çавăнпа та 2005 çулхи юпа уйăхĕнчи суйлавра та ку тăрăхра пурăнакансем пĕр саслăн Г. Мазиковшăн пулаççĕ. 2006 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен çĕнĕ саккунпа килĕшўллĕн ял тăрăхĕсен хăйсен бюджечĕ йĕркеленме пуçлать. Ку лайăх-ха, анчах бюджет пĕр кунта пулакан япала мар. Мăн Сĕнтĕрте вара ял тăрăхне хăт кĕртессипе пĕрре хăйне кăтартнă йĕркенех аталантараççĕ. Вомпăкассинче 10 çул каялла пушарта клуб кĕлленнĕ хыççăн, Мăн Хураçкара клуб вырăнне чиркў уçсан ял клубĕсем хупăннă. Ял çыннисем çак социаллă объектсемсĕр юлаççĕ. Ăнланмалла, çак ял çыннисем валли те тивĕçлĕ социаллă пурнăç условийĕсем туса пама клубсем кирлĕ. Геннадий Петровичăн пуçĕнчен çак шухăшсем пĕр кунлăха та тухман.

Халăх хăйне суйлавра шанчĕ пулсан унăн çак лару-тăруран тухма та çул шыраса тупмалла. Çак ыйтăва татса парас тата Мăн Сĕнтĕре хăт кĕртес ыйтусене çиччĕ виçсе пăхнă хыççăн ял тăрăхĕн пуçлăхĕн шухăшĕ Мăн Сĕнтĕрте 12 çул каяллах икĕ хутлă почта çурчĕ туса лартнă хыççăн та ăна кивĕ çурчĕ картласа ларни кăмăла каймастчĕ. Çурчĕ «Мускавăн» пулнăран çак ыйтăва ял тăрăхĕ майлă татса парассипе те Г. Мазиков Раççей тĕп хулине пĕрре мар çырупа тухать. Çĕнĕ почта çуртне кĕрсе çўреме чăрмантарнă, пушар хăрушсăрлăхне пăсса ларнă çурта сўтме ирĕк илсен, унăн кăшкарĕ Вомпăкассинчи социаллă центра йĕркелеме куçать. Нормативсемпе шутласа пăхсан, ăна проект витĕр кăларса экспертиза тутарса тата подрядчик тупса ĕçлеттерме пĕр миллион тенкĕ ытла укçа-тенкĕ тухса каять. Çакна тума ял тăрăхĕн çĕнĕ бюджетĕнче хальлĕхе укçатенкĕ çук-ха. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ хăй строитель пулнипе усă курса тунă чертежсемпе тата ытти службăсемпе килĕшсе татăлса, хăй вăйĕпе ĕç бригадисем тупса тата вĕсене ĕç укçи тўлесе ĕçлеттернĕ хыççăн 2006 çулхи октябрьте ял клубĕ, библиотека, фельдшерпа акушер пункчĕ вырнаçнă социаллă центра комисси йышăнать. Унта çемье бюджетĕнчен кайнă тăкаксен ытларах пайĕ те ял тăрăхĕн пуçлăхĕ патне «Гавитан» хресчен (фермер) хуçалăхĕ урлă çаврăнса çитет. Халăхра кирек епле пуçарулăх та айăплавсăр иртмест теççĕ. 2006 çул пĕтĕмлетĕвĕсемпе ял аталанăвне харпăр хăй вăйне хывнăшăн тата пулăшнăшăн «Меценат çăлтăрĕ» обществăлла ордена тивĕçнĕ Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Геннадий Петрович Мазиковпа та, «Гавитан» хресчен (фермер) хуçалăхĕн ертўçи Виталий Анатольевич Гаврилов тĕлĕшпе те çаплах пулса тухать. «Гавитан» хресчен (фермер) хуçалăхĕн ĕç-хĕлне налук инспекцийĕ тĕрĕсленĕ хыççăн тĕрĕслевçĕсем çўлерех асăннă строительство объекчĕсене тунăшăн (Г. Мазикова тўленĕ укçа хучĕсемпе çапла тухать те) хуçалăха 2005-2006 çулсемшĕн 400 пин тенкĕ тĕрлĕ налуксемпе штрафсем тата пени тўлемелле шутласа параççĕ. Çапла вара ырă ĕçе кўлĕннĕ «Гавитан» хресчен (фермер) хуçалăхĕ самантрах экономика капкăнне çакланать. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн хăчĕшĕн вăй хунă Г. Мазиков та ырă ят илеймест. Анчах çак вăхăта Шупуçĕнче те, Мăн Хураçкара та ял çыннисем клуба çўреççĕ, ялти фельдшерпа акушер пунктĕнче пулăшу илеççĕ.

– Вырăнсенче ĕçлеççĕ пулсан вĕсене хавхалантармалла пек, анчах пурнăçра урăхла пулни курăнать. Вомпăкассисем те паян вырăнтах медицина пулăшăвĕ илме пултарнишĕн, çамрăксем тăтăшах клуба пуçтарăннишĕн, кунта культурăллă мероприятисем иртме пуçланишĕн, социаллă центр туса лартни унччен 15 çул ишĕлчĕкпе вĕлтĕрен-пиçен айĕнче выртнă территорие тирпейилем кĕртнишĕн ял тăрăхĕн пуçлăхне тав тăваççĕ. Кунта çўрекенсем çут çанталăк газĕпе áшăнакан çуртра хăйсене хĕлле те канлĕ туяççĕ. Йăлтах йĕркеллĕ темелле пек, анчах... Паян ку клуба хамăр ялсемсĕр пуçне кўршĕри Малтикаспа Токшик ялĕсен çамрăкĕсем те çўреççĕ. Яш-кĕрĕм ял клубне тирпейлĕ пăхса тăрать, – терĕ ял библиотекинчен кăнтăр апатне кайма тухнă Римма Варсонофьевна Гаврилова библиотекарь.

... Ĕнер, юпа уйăхĕн 30-мĕшĕнче, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ тивĕçлĕ канăва кайрĕ. Çакăнпа пĕрлех Геннадий Петрович Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн депутачĕсен Пухăвне хăйне ĕçрен хăтарма ыйтса çыру çырса пачĕ.

Анатолий БЕЛОВ.

Автор сăн ўкерчĕкĕ.